# Çитĕнӳсем пур, татах та тăрăшмалла

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

Комбайнсем патĕнчен тырă турттаракан водительсене те ятранах асăнса хăвармалла. «Ударник» хуçалăхри А.Е. Анисимов (1867 тонна), В.К. Петров (1581тонна), Суворов яч. хис. хуçалăхри И.И. Дмитриев (1478 тонна), Чкалов яч. хис. хуçалăхри В.П. Трофимов (1300 тонна), Ильич яч. хис. хуçалăхри И.Ю. Михеев (1175 тонна) уйрăмах вăр-вар пулчĕç.

Çĕр улмине те кăçал иртнĕ çулхинчен тухăçлăрах çитĕнтерсе илме пултартăмăр. Кашни гектартан вăтамран районĕпе 152 центнер тухрĕ «иккĕмĕш çăкăр». 1063 гектар çинчен пĕлтĕрхинчен 5 пин тонна ытларах – 15800 тонна – кăларса илтĕмĕр. Ильич яч. хис. хуçалăхра (230 центнер), «Да-Ан» чикĕллĕ яваплăхлă обществăра (210 центнер), «Ударникра» (165 центнер), «Орининора» (160 центнер), «Свободăра»(160 центнер) кăтартусем тата та пысăкрах. Çавăн пекех «Бархаткин», «Толстов», «Гаврилов» хресчен (фермер) хуçалăхĕсем те «иккĕмĕш çăкăра» кашни гектартан 160-150 центнер илни савăнтарать.

Палăртса хăвармалла, паян хуçалăх ертӳçисен элитăллă вăрлăхпа ĕçлесси çине те тимлĕн пăхмалла. Çитменнине патшалăх элитăллă вăрлăх туянакансене РФ, республика бюджетĕнчен субсидилет. Кăçал элитăллă тыр-пул вăрлăхне районĕпе пурĕ 105 тонна, çĕр улми вăрлăхне 148 тонна туяннă. Çакăн уссине кăçалхи тĕслĕхсем те çирĕплетсе параççĕ. Акă Ильич яч. хис. хуçалăхри урпан «Владимирский» сорчĕ кашни гектартан вăтамран 73 центнер тухрĕ. «Восток», Чкалов яч. хис., «Оринино», ял хуçалăх предприятийĕсемпе «Бархаткин» хресчен (фермер) хуçалăхĕнче урпан «Эльф» сорчĕн тухăçĕ 40 центнертан та иртрĕ. Çавăн пекех çĕр улмин пысăк пахалăхлă сорчĕсем те тухăçпа савăнтарчĕç. «Да-Ан» чикĕллĕ яваплăхлă обществăра çĕр улмин «Снегирь», «Рокко» сорчĕсем кашни гектартан 300 центнер, «Бархаткин» Х(Ф)Х «Наяда» сорт 300 центнертан та ытларах, Ильич яч. хис. хуçалăхра «Удача» сорт 350 центнер тухрĕ.

**– Кĕрхи культурăсене ытларах акса хăварни пысăк тухăç çăл куçĕ иккенне хуçалăхсенче лайăх пĕлеççĕ. Мĕнлерех иртрĕ кăçал ку ĕç?**

– Кĕрхи культурăсене пĕтĕмпе кăçал 4118 гектар çинче акса хăварнă. Вăхăтра çаврăнăçуллăрах пулнă пулсан, ку лаптăк татах та ытларах пулмаллаччĕ. Кĕр тыррисене Суворов яч. хис. хуçалăх ĕçченĕсем 794 гектар çинче акса хăварчĕç. Вĕсем Юнкă тăрăхĕнчи усă курман çĕрсене, Турай тăрăхĕнчи пусу пулнă уйсене кĕрхи культурăсем акса хăварчĕç. Çавăн пекех ку енĕпе «Ударник» (420 гектар), «Оринино» (313 гектар), «Свобода» (230 гектар), «Сеятель» (242 гектар»), Ильич яч. хис. (210 гектар) лайăх ĕçлерĕç.

**– Юрий Александрович, район выльăх-чĕрлĕх продукцине туса илессипе мĕнле ĕçлесе пырать?**

– Кăçалхи 9 уйăхра районĕпе пурĕ ял хуçалăх продукцине 265300,0 пин тенкĕлĕх туса кăларнă. Ку вăл иртнĕ çулхи çак вăхăтринчен 22,9 процент нумайрах. Çакăнта выльăх-чĕрлĕх пăхакансен тӳпи те çителĕклех. Çулталăк пуçланнăранпа пĕтĕмпе 4850 тонна аш-какай туса илнĕ. Е иртнĕ çулхинчен 2,8 процент ытларах. Çав шутран ял хуçалăх предприятийĕсенче – 1607,2 тонна. Сĕт туса илессипе те çĕнсе илнĕ чикĕсенчен чакмастпăр. Пурĕ кăçал 38579 тонна сĕт туса илтĕмĕр. Пĕлтĕрхинчен кăшт нумайрах. Çак хушăра кашни ĕнерен вăтамран 3657 килограмм (108,8 процент) сĕт сунă. «Герой» хуçалăхра кашни ĕнерен вăтамран 4038 килограмм, Суворов яч. хис. хуçалăхра 3855 килограмм, «Лидерта» 3767 килограмм, «Оринонора» 3500 килограмм, Ильич яч. хис. хуçалăхра 3450 килограмм сĕт суса илме пултарчĕç. Районти 4 доярка 4 пинлĕ чикĕрен иртсе кайрĕ. Вĕсем З. Андреева («Ударник» – 4818 килограмм), «Герой» хуçалăхри Н.Борисова (4423 килограмм), Е. Васильева (4298 килограмм), Н. Рыжкова (4132 килограмм).

Районĕпе мăйракаллă шултра выльăхсен талăкри ӳт хушаслăхĕ вăтамран 515 грампа танлашрĕ. «Герой» (662 грамм), «Оринино» (633 грамм), «Сеятель» (625 грамм) хуçалăхсем вара ӳт хушаслăха районти вăтам кăтартуран иртterме пултарчĕç. Самăртма хупнă выльăхсем вăтамран талăкра 708 грамм ӳт хушнă пулсан, Н. Захаровапа Р. Горшкова («Оринино») пăхакан выльăхсем талăкра вăтамран 1084-шар грамм, «Свобода» хуçалăхри Йӳтĕркассинчи ферма ĕçченĕсем пăхакан выльăхсем 824-шар грамм ӳт хушма пултарчĕç.

Сысна самăртнă, çурасем илнĕ çĕрте те маттур ĕçченсем вăй хураççĕ. Районĕпе сыснасем талăкра вăтамран 335 грамм (103,4 процент) ӳт хушнă пулсан, «Агро-Урожайра» (411 грамм), «Оринингора» (449 грамм), «Лидерта» (419 грамм), «Ударникра» (415 грамм), Суворов яч. хис. хуçалăхра (398 грамм) кăтартусем татах та пысăкрах. А.В. Филиппова, Л.В. Гордеев (Суворов яч. хис.) пăхакан выльăхсем талăкра вăтамран 540-шер грамм, И.Пискаревапа Э. Трофимова («Герой») пăхаканнисем 583 грамм, «Оринино» хуçалăхри Атапай участокĕнчи сыснасем 534 грамм ӳт хушнă. Самăртма хупнă сыснасен талăкри ӳт хушаслăхĕ районĕпе 391 грампа танлашнă пулсан, «Геройра» ку кăтарту 604 грамм, «Востокра» 556 грамм.

Уяв умĕн Муркашри чăх-чĕп фабрики çулсеренех ăнăçлă ĕçленине палăртмасăр иртме çук. Кăçалхи 9 уйăхра кунта кашни чăхран 243 çăмарта илнĕ е пĕлтĕрхинчен 4 çăмарта ытларах.

Ял хуçалăх ĕçĕсене вăхăтра тата кирлĕ пек пурнăçлама çăмăл мар. Çавăнпа та çак ĕçре пулăшса пынăшăн Муркашри сĕт-çу завочĕн коллективне тав тăвас килет. Çавăн пекех Муркашпа (1544,5 тонна сĕт, 4865 тонна аш) Мăн Сĕнтĕр (890,4 тонна сĕт, 51,7 тонна аш) райповĕсем те халăхран сĕт, аш-какай пуçтарассипе тăрăшса ĕçлеççĕ.

**– Ял ĕçченĕсен умĕнче паян тумалли ĕçсем мĕнлисем?**

– Паян уй-хирсенче кĕрхи çĕртме тăвассипе тимлеççĕ. Паянхи куна ăна 3,5 пин гектар çинче туса иртт ернĕ. Çавăн пекех пахча çимĕçе пуçтарса кĕртмелле. Çитес çул валли хывнă вăрлăха кондицие лартассипе тимлемелле. Халĕ акă обществăлла выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçармалли тапхăр пуçланчĕ. Продуктивлăха ӳстерессишĕн тăрăшмалла. Çакна валли пирĕн пур условисем те пур. Условнăй кашни выльăх пуçне 22,4 центнер апат янтăланă. Хуçалăхсем выльăх апачĕ пахалăхлă упрантăр тесе Чулхула облаçĕнчи «Навигатор» фирмăпа тачă çыхăнса ĕçлерĕç. Пурĕ 25 пин тоннăна яхăн силос-сенаж хатĕрленĕ çак мелпе. Ял хуçалăх предприятийĕсенче паян выльăхсен йышĕ чакрĕ. Мăйракаллă шултра выльăхсен йышне «Восток», «Герой», Ильич яч. хис., «Свобода», Чкалов яч. хис. хуçалăхсем, сыснасен йышне «Свободăпа» Суворов яч. хис. хуçалăхсем малтанхи шайрах тытса хăварма пултарчĕç. Районти ытти хуçалăхсен те вĕсенчен тĕслĕх илмелле, выльăхсен йышне ӳстерессипе тимлемелле. Пĕтĕмĕшле каласан, ӳсен-тăран продукцине илнĕ çĕрте те, выльăх-чĕрлĕх продукцине илнĕ çĕрте те паянхинчен палăрмаллах лайăх ĕçлемелле.

**–Палăртнине пурнăçлама мĕне тĕпе хумалла паян?**

– Пĕрремĕшĕнчен, кадрсен ыйтăвне татса парассипе ĕçлемелле. Паян ял çынни ял хуçалăхĕнчи ĕçрен сивĕнсе пыни сисĕнет. Хуçалăхсенче çавна пулах специалистсем, ĕçлекенсем çитмеççĕ. Çавăнпа та ачасене мĕн пĕчĕкрен ĕçе хăнăхтарса ӳстермелле ашшĕ-амăшĕсен. Кунта шкултан та нумай килет. Шкулсем çумĕнче йĕркеленекен лагерьсенче ачасене ĕç воспитанине парассине куçран вĕçертмелле мар. Вĕренӳ заведенийĕсемпе те кадрсем хатĕрлес тĕлĕшпе тачăрах ĕçлемелле.

Иккĕмĕшĕнчен, пурнăç паян ял хуçалăхĕнче çĕнĕ технологи çине куçма хистет. Ĕç вăйĕсем сахалланса пыниех çапла тума ыйтать. Ку енĕпе темиçе ырă тĕслĕх илсе кăтартасах килет. «Свобода» ăратлă выльăх ĕрчетекен ял хуçалăх предприятийĕ кăçал 1200 пуç вырнаçмалăх сысна сарайне хута яма хатĕрленет. Ĕçе кунта Германи технологийĕпе йĕркелеççĕ. Тислĕке вакуумлă майпа тасатмалла пулать тата ытти те. Компьютерпа йĕркелекен кунти пĕтĕм ĕçе 2 çын пурнăçлама пултарать. Е «Ударник» хуçалăха илер. Кунта реконструкциленĕ хыççăн ĕнесен сарайĕ хута каймалла. Сĕт пăрăхне, холодильник вырнаçтарни вĕсене сĕте чи лайăх пахалăхпа туса илме май парать. Тислĕке кунта тракторпа тĕксе кăлармалла тăваççĕ. Выльăх апатне те транспортер ятарлă выльăх апачĕн сĕтелĕ çине хурса парать. Апла пулсан тĕслĕх илмелли хуçалăхсем хамăр патăмăртах пур. Çавăнпа та çамрăк ертӳçĕсен ĕмĕрĕпех хуçалăха ертсе пыракан П.П. Давыдовпа К.Е. Сретинскийрен тĕслĕх илмелле, çĕнĕ технологи çине куçмаллах. Мĕншĕн тесен хальхи вăхăтра выльăх-чĕрлĕх продукцине ытларах туса илни «чĕрĕ укçа» ĕçлесе илме май парать. Хуçалăх ертӳçисем çакна ăнланĕç, умри тĕллевсене пурнăçлассишĕн тăрăшĕç тесе шутлатăп.

Сăмаха вĕçлесе пынă май район ĕçченĕсене пурне те пархатарлă ĕçшĕн, ырми-канми вăй хунăшăн, район аталанăвĕшĕн тăрăшнăшăн чун-чĕререн тав тăватăп. Тепĕр хут уяв ячĕпе саламлатăп. Малашне те ӳсĕмлĕ ĕçлеме ыра сунатăп.

**– Тавах, Юрий Александрович, калаçушăн.**

**Л.ПАВЛОВА калаçнă.**

## Ыран – Ял хуçалăх тата продукци тирпейлекен промышленноçра ĕçлекенсен кунĕ



*Октябрĕн 12-мĕшĕнче Раççейре Ял хуçалăх тата продукци тирпейлекен промышленноçра ĕçлекенсен кунне уявлаççĕ. Йăлана кĕнĕ тăрăх Чăваш Республикинче ку уява мĕн пур вырма ĕçĕсене вĕçленĕ хыççăн паллă тăваççĕ. Пĕтĕм Раççейри çак пысăк уяв умĕн çĕр-шывăн аграри банкĕн ертӳçи Юрий ТРУШИН Раççей ялĕсен хальхи пурнăçĕпе малашлăхĕ пирки каласа пама пулчĕ.*

# Çĕр çинче ĕçлессинчен чыслăраххи çук

**– Юрий Владимирович, Раççей ял хуçалăх банкне сакăр çул каялла патшалăх агропромышленность комплексне кредитпа финанс тĕлĕшĕнчен пулăшу пама йĕркеленĕ. Ял хуçалăх ĕçченĕсен професси уявне эсир мĕнле кăтартусемпе кĕтсе илетĕр?**

– Сакăр çул хушшинчи ĕçсем пирки калас пулсан çавна асăнмалла. Çак тапхăрта эпир ял хуçалăх продукцине туса хатĕрлекенсен пур категорийĕсене те – çĕр ĕçĕпе пурăнакансенчен тытăнса пăлансем ӳстерекенсем таранах – хамăрпа çыхăнса ĕçлеме явăçтарма пултартăмăр. Банк арсеналĕнче 30-а яхăн кредит программи. Вĕсем ялсенчи кивçен укçа илекенсене пурне те тивĕçтерме пултараççĕ. Пулă ĕрчетме кредитсем парса пулăшасси анлăн сарăлса пырать, вăрман хуçалăхне аталантарма кредитсемпе пулăшма тытăнатпăр.

Çак вăхăта эпир аграри сферине аталантарма 750 миллиард тенкĕне яхăн хыврăмăр. Тӳрех калăпăр, пĕчĕк сумма мар. Çапла вара ытлашши пысăклатмасăрах калатăп, юлашки çулсенче тăнăçлă аталанса пыракан отрасле çӳллĕрех пусăма çĕклеме пирĕн банк та пысăк тӳпе хыврĕ.

**– Россельхозбанкра мĕнле кредитсем илме май пур-ха?**

– Банк паракан кредитсемпе тырпул акса хăварма тата пуçтарса кĕртме, ял хуçалăх техники туянма, выльăх-чĕрлĕх комплексĕсене туса лартма тата реконструкцилеме май пур. Ялта пурăнакансем хăтлă çуртйĕр çавăрма, тивĕçлĕ вĕренӳ илме, çурт-йĕре газ кĕртме тата юсав ĕçĕсем туса ирттерме т. ыт. те пултараççĕ.

**– Россельхозбанк Ял хуçалăхне 2008–2012 çулсенче аталантармалли патшалăх программин тĕп участникĕсенчен пĕри пулса тăрать. Малтанхи итогсене пĕтĕмлетме май çук-и?**

– Пилĕк çуллăха палăртнă Патшалăх программине пурнăçлама хутшăнасси паян Россельхозбанкăн стратегиллĕ задачисенчен пĕри пулса тăрать. Пирĕн банк Патшалăх программине хутшăнса çулталăк пуçланнăранпа кредитсем панин виçи 180 миллиард тенкĕне çитрĕ. Танлаштарма: 2006–2007 çулсенче «Агропромышленность комплексне аталантарасси» наци проектне пурнăçа кĕртнĕ май пирĕн банк кредитсем 150 миллиард тенкĕ пачĕ.

Эпир выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе, ӳсен-тăран продукцийĕ туса илессине, салук шучĕпе ял хуçалăх техникине туянассине, ял хуçалăхĕн ытти тĕллевĕсемпе кредитсем сахал мар уйăратпăр. Кунпа пĕрлех пĕчĕк агробизнеса аталантарасси çине те эпир уйăракан тимлĕх пĕчĕк мар тесе каланă пулăттăм. Пирĕн урлă уйрăм хушма хуçалăх хуçисем, фермер хуçалăхĕсене йĕркеленисем сахал мар укçа-тенкĕ илеççĕ.

Патшалăх программипе килĕшӳллĕн уйрăм çынсен хушма хуçалăхĕсене аталантарма кредит парса пулăшасси унчченхи икĕ çулхи пекех япăх мар пулса пырать. Хушма хуçалăх хуçисене çак вăхăта 400 пин кредит панă.

Хăш-пĕр чухне банк кредичĕсене панинчен ялсенче усси çук тесе калакансем те çук мар. Кунпа пачах килĕшме пултараймастăп. Паян çĕршывра кредит ресурсĕсемпе ытларах усă куракансенчен ял хуçалăх отраслĕне кăна асăнма пултаратăп. Эпир ял çыннисем патне банк çăмăллăхĕсемпе пыратпăр пулсан, вĕсен шанчăк туйăмĕ çуралать.

**– Паянхи кун хăш-пĕр банксем район центрĕсенче хăйсен офисĕсене хупаççĕ. Эсир вара хăвăрăн уйрăмсене пĕчĕк ялсенче те уçатăр...**

– Регионсен сетне аталантарасси Россельхозбанкăн спецификипе çыхăннă. Пирĕн политикăн тĕп тытăмĕ вăл – банк пулăшăвĕпе тивĕçтерессине унпа усă куракансем патне май пур таран çывăхарах, аякри ялсем таранах тивĕçтересси.

Хальхи вăхăтра Россельхозбанк çĕр-шывра хăйĕн филиалĕсене йĕркелессипе иккĕмĕш вырăн йышăнать. Пĕтĕмпе пирĕн 1700 точка шутланать. Вĕсем Раççей Федерацийĕн 78 субъектĕнче вырнаçнă. Çулталăк вĕçлениччен вара Ямало-Ненецк автономи округĕнче те тепĕр филиал уçма планлатпăр.

Ял çыннисене территори тĕлĕшпе çывăхарах пулнă май хамăрăн усçăнлăхпа тата çирĕплĕхпе эпир вĕсен шанăçне тивĕçетпĕр. Çак вăхăта Россельхозбанкăн 1 миллион та 300 пин клиент шутланать.

**– Çакăн пирки те ыйтса пĕлес килет. Эсир шутланă тăрăх Раççей агропромышленность комплексне аталантарма татах мĕн тумалла пек туйăнать?**

– Ытларах мĕн çине тимлĕх уйăрмалли пирки асăнас пулсан, инновацисене пурнăçа кĕртессине, техника тата технологи модернизацине туса ирттерессине уйрăммăн палăртнă пулăттăм. Вĕсем ял хуçалăхĕнче ĕç тухăçлăхне ӳстерме, ресурссене перекетлеме, ял хуçалăх продукцийĕн конкурентлăхне ӳстерме май парĕç. Россельхозбанк ял хуçалăх техникипе оборудованисем туянма салук шучĕпе кредитсем уйăрса парса ял хуçалăх продукцине туса илекенсем валли техника тĕлĕшĕнчен пуянланма япăх мар майсем туса парать.

Кунпа пĕрлех Раççей агропромышленность комплексĕшĕн ял территорийĕсене комплекслă аталантарни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Эпĕ пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха анлă кредит пулăшăвĕ парасси, ял районĕсене газ кĕртесси, культурăпа социаллă ыйтусене татса парасси пирки калатăп. Ку енĕпе те эпир çине тăрса ĕçлетпĕр.

**– Юрий Владимирович, уяв умĕн эсир ял ĕçченĕсене мĕн сĕннĕ пулăттăр?**

– Çĕр çинче ĕçлессинчен хисеплĕрех те пархатарлăрах ĕç çук тесе шутлатăп. Ял ĕçченĕсене пурне те пысăк тав сăмахĕ калатăп. Сирĕн çемьесенче килĕшӳпе ăнăçу пулччăр. Сирĕн пур пуçарусем те ăнăçлăх кӳччĕр. Эпир вара сире ку енĕпе пулăшма хатĕр.

**В. ШАПОШНИКОВ калаçнă.**

## Çĕнĕлĕх

# Муркашра – 2-мĕш номерлĕ суд участокĕ

Чăваш Республикин 2007 çулхи ноябрĕн 15-мĕшĕнче йышăннă «Чăваш Республикин «Чăваш Республикинче мировой судьясен должноçĕсене тата суд участокĕсене туса хурасси çинчен» Саккунне улшăнусем кĕртесси çинчен» 74-мĕш номерлĕ Саккунĕпе килĕшӳллĕн Муркаш районĕнче иккĕмĕш суд участокне туса хунă.

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн 2008 çулхи сентябрĕн 26-мĕшĕнчи 348-мĕш номерлĕ «Мировой судьясене çирĕплетесси çинчен» постановленийĕпе килĕшӳллĕн Муркаш районĕн 2-мĕш номерлĕ суд участокĕн мировой судйи пулма виçĕ çуллăха Елена Геннадьевна Никитинана çирĕплетнĕ.



Е.Г. Никитина 1978 çулхи июнĕн 1-мĕшĕнче Шупашкар хулинче çуралнă. Юридици енĕпе аслă пĕлӳ илнĕ, 2001 çулта Мускаври патшалăхăн усă университетне «Юриспруденция» специальноçпа вĕренсе пĕтернĕ.

Хăйĕн ĕçне Е.Г. Никитина 1996 çулта Шупашкарта Мускав районĕн çар комиссариатĕнче призыв пункчĕн секретарь-курьерĕнче тытăннă. 1997 çулхи март уйăхĕнчен тытăнса çав çулхи сентябрьччен – Шупашкар хулинчи Калинин район сучĕн курьерĕ. 1997 çулхи сентябрьтен тытăнса 1999 çулхи августчен Шупашкар хулинчи Калинин район судĕнче машинисткăра ĕçленĕ. 1999 çулхи августран тытăнса 2001 çулхи апрельччен вара Шупашкар хулинчи Калинин район сучĕн суд ларăвĕсен секретарĕнче вăй хунă. 2001 çулхи апрель уйăхĕнчен тытăнса 2002 çулхи март уйăхĕччен Шупашкарти Мускав район сучĕн суд ларăвĕсен секретарĕнче тимленĕ. 2002 çулхи мартăн 18-мĕшĕнче куçăмлă майпа ăна çак судăн консультанчĕ пулма çирĕплетнĕ. 2002 çулхи октябрĕн 8-мĕшĕнчен тытăнса Чăваш Республикин Шупашкарти Мускав район сучĕн судйин пулăшаканĕн тивĕçĕсене пурнăçласа пынă.

2008 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнче Е.Г. Никитина хăйĕн служба тивĕçĕсене пурнăçлама тытăнчĕ. Çав ятпа асăннă кун Муркаш район судĕнче савăнăçлă мероприяти иртрĕ. Унта район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов, Чăваш Республикинчи Суд департаменчĕн управленийĕн пуçлăхĕн çумĕ В.П. Степанов, Муркаш район сучĕн председателĕ Э.Л. Тарасова, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ, районти тĕп больницăн тĕп врачĕ В.Г. Данилов, Муркаш районĕн прокурорĕ С.А. Фирсов, районти шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕ Е.Д. Макаров, Муркаш районĕнчи 1-мĕш номерлĕ суд участокĕн мировой судйи Т.М. Салдыркина, суд приставĕсен районти пайĕн пуçлăхĕ, аслă суд приставĕ Е.В. Иванова хутшăнчĕç.

**Муркаш район судĕнчен пĕлтернинчен.**

**Сăн ӳкерчĕкре: Е.Г. Никитинана Муркаш районĕн 2-мĕш номерлĕ суд участокĕн мировой судйи пулма çирĕплетнĕ май район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов саламлать.**